20-18

Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмла Канаш Республикки.

Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

Г. Зиновьев.

# Йалта мӗн тумалла?

## (Что делать в деревне?)

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

Тӗп Ҫӑваш Пайӗ кӑларнӑ.

Издательство Центрального Чувашского Отдела
при Нар. Комиссариате по национальным делам.
Хусан—1920 ҫул.

Ҫак кĕпекере Зиновьев йулташăн сăмахне ҫырнă. Малтанхи сăмаха йулташ Зиновьев опластри йалсенҫи ҫухăнсен сиестĕнҫи 18000 хресҫен телекаҫĕсем умĕнҫе каланă. Иккĕмĕш сăмахне Питĕрти Советăн Саҫҫетанинҫе хресҫен универҫиттетĕнҫе вĕренекенсене ҫĕнсе каланă.

Икĕ сăмахне те кашни тӳрĕ хресҫенĕн те вулас пулат. Вĕсенҫе йалта мĕн тумалли ҫинҫен, кулаксемпе мĕнле кĕрешмеллипе йепле ҫĕнĕ пурăнăҫ тăвасси ҫинҫен калат.

# Йалта мӗн тумалла.

Тӑвансем-хресҫенсем! Йепле пуҫланса кайрӗҫ ҫухӑнсен кӑмиттеҫӗсем? Есир пӗлетӗр, вӗсем, 1918 мӗш ҫулта ҫӗртме уйӑхӗн 11-мӗш кунӗнҫе кӑларнӑ текрет пирки пуҫланса кайрӗҫ. Вӗсем пуҫланни кӑшт ҫеҫ ҫур ҫул ҫитеймест. Малтан вӗсене: ҫимӗҫ тӑратас хуласене тырӑ парас ӗҫе пулӑшма пуйансен тыррисене шаккаса кӑларма, тата пурлӑ-ҫуклӑ ҫимӗҫ йапалисене йӗркеллӗ валеҫсе пама пуҫласа йаҫӗҫ.

Есир, йалти ҫухӑнсен кӑмиттеҫӗсенҫе тӑракансем ҫав кӑмиттетсем пурӑнӑҫ хушнӑ пирки ҫак ӗҫсене ҫеҫ мар урӑх ӗҫе те тума тытӑннине манран лайӑхрах пӗлетӗр. Вӗсем ҫимӗҫ ӗҫӗпе ҫеҫ мар тата ытти пӗтӗм йалти пурӑнӑҫ йӗркисене астуса тӑма пуҫларӗҫ. Кун пек пулни вӑл питӗ аван. Халӑх Комиссарӗсен канашӗ ҫак текрета кӑларнӑ ҫухне ҫухӑнсен кӑмиттеҫӗ ҫимӗҫ ӗҫне анҫах пӑхса халӑх Комиссарӗсен Советҫӗ пӑмала темерӗ, вӑл ҫи кирлине кӑтартрӗ. Халӑх Комиссарӗсен канашӗ ҫухӑнсен кӑмиттеҫӗсем пирӗн пурӑнӑҫа пур йенҫен те пӑхса тӑҫҫӑр, тенӗ. Пуринҫен ытла ҫухӑнсен кӑмиттеҫӗсем кулаксене карлан-кӑран илҫҫӗр, тенӗ.

Ҫухӑнсен кӑмиттеҫӗсем пуҫланнӑ ҫухне вӗсене хирӗҫ тӑракансем нумай пулҫӗҫ. Пирӗн коммунистсен парттийӗсӗр пуҫне пур ытти парттисем те ҫухӑнсен комиттетве тӑвассине хирӗҫ калаҫҫӗҫ. Унҫҫен малтан канашсен ирӗкӗшӗн тӑракан партти сулахай ессерсен парттийе ҫухӑнсен комиттеҫӗсене тӑвассине хирӗҫ ытлах та хайаррӑн тӑҫӗ, Коммунистсен парттийӗпе сулахай ессерсен парттийӗ уйрӑлса кайасси пуринҫен те ытла ҫакӑн пирки пулҫӗ.

Сулахай эсерсен парттийĕнҫе тăракансене, йе вĕсен майлă йулташсене епĕ калап: ҫак ҫухăнсен комиттеҫĕсем ҫине пăхса вĕренĕр! Хресҫенсенҫен кам ҫухăнсен комиттеҫĕсем кирлĕ мар, тесе калĕ? Пĕр кулак ҫеҫ калĕ, пĕтĕм йалти ирĕке ĕлĕкхи пекех пуйансем тытса тăҫҫăр тийекенсем ҫеҫ калĕҫ; ҫавсем ҫăнах та ҫав комиттетсене хирĕҫ тăраҫҫĕ.

Сулахай эсерсен парттийĕ ҫухăнсен кăмиттеҫĕсем ҫинҫен мĕн шухăшлат-ҫĕ? Вĕсене хирĕҫ вăл пĕтĕм вăйпа тавлашаҫҫĕ. Пĕтĕм Раҫҫейри Канашсен 5-мĕш сйестĕпҫе. Мускавра сулахай эсерсен парттийĕн пуҫлахĕсем ҫав ҫухăнсен кăмиттеҫĕсем пиркийех пĕтĕм ĕҫлекенсемпе хресҫенсем умĕнҫе пирĕнтен уйрăлса кайрĕҫ. Вĕсен ҫи лайăх пуҫлăхĕсем калаҫҫĕҫ: епир сире ҫухăнсен комиттеҫĕсем тума памăпăр, тет-ҫĕҫ. Мĕншĕн?—терĕмĕр епир. Акă мĕншĕн,— терĕҫ вĕсем,—епир йала уйăрастăн мар, йалта пурте пĕрле пурăнмалла, терĕҫ. Ҫакна хирĕҫ епир каларăмăр: йалта та хулари пекех, пуйан та ҫухăн та пур ҫакна пĕҫĕк аҫа та пĕлет. 12 ҫулхи аҫа сире кирек хăш йала та кăтартса йарĕ: акă кунта кулак, кунта пуйан, кунта йун ĕҫекен, кунта тарăхса ĕҫлекен ҫын ҫухăн хресҫен пурăнат тийĕ. Епир ыйтрăмăр: есир сулахай эсерсем йала, ĕлекхи пекех кулак тытса тăтăр тетĕр-и, йе халĕ те пулин ҫав кулака сирпĕтес тĕрĕр-и? терĕмĕр. Нийепле аслă револютси те пулас ҫук йалсенҫе хулари пекех револютси пулмасан. Хулара та хăшĕ-хăшĕ калаҫҫĕҫ: мĕншĕн пирĕн вăрҫас, пĕрне пĕри йуратса, пĕр пĕр уҫретилкă таврашĕнҫе нимĕн револютсисĕрех килĕшсе ыталанар тет-ҫĕҫ. Ĕҫлекен халăх ҫакăнтан кулса калаҫҫĕ: пуршуйсем пĕр ҫĕлхене анҫах ăнланмаҫҫĕ, ҫак ҫĕлхе-штыксен тупăсен, пулеккăсен ҫĕлхи. Королĕсем, панккирсем, пуршуйсем, улпутсем тĕнҫинех ҫав ҫĕлхесĕр пуҫне урăххине пĕлмеҫҫĕ те. Халĕ ĕнтĕ пăшалсем, тупăсем халăх аллине лекнĕ хыҫҫăн хура халăхăн ҫак ҫĕлхепе пуршуйсемпе калаҫмаллине пĕлес пулат.

Кунта хулара та, ҫитменнине Питӗрте те револютси пуҫланнсанах канашсене ӗҫлекен халӑхшӑн пӗрре те тӑрӑшас темен ҫынсем кӗрсе пӗтнӗҫҫӗ. Питӗрти канашра та студентсӑсем тӑратҫҫӗҫ, эссерсенпе меншевиксен партти ҫак Совета ваккатсене кӳртсе пӗтернӗ-ҫҫӗ. Малтан Питӗрти Канашра ҫавнашкаллӑ пуршуйсен тӗпуттаҫӗсене ҫилай тупма пулатҫӗ. Анҫах ӗҫлекенсен ирӗкӗ хӑватланнӑҫемӗн, ӗҫлекенсем, лайӑх пӑпӑр тытса ҫак улпутсене канашран шӑлса хӑваларӗҫ. Ӗҫлекенсем вӗсене калатҫӗҫ: эпир Канашра сиренсӗр пуҫне те питӗ лайӑх ӗҫлӗпӗр, эсир хӑвӑра валли урӑх вырӑн тупӑр, тет-ҫӗҫ.

Майӗпе ӗҫлекенсен хулари Канашсенҫе ӗҫ ҫыннисем ҫеҫ тӑмалла турӗҫ. Ӗҫпе пурӑнман ҫынсене ӗҫлекенсемшӗн тӑрӑшманнисене кӑлармалла турӗҫ. Йалта ку ӗҫ аплак мар.

Йала револютси хумӗ ҫитиҫҫеп нумай вӑхӑт иртрӗ. Ӗлӗкхи становайсем, пупсем, кулаксем, усламӑҫӑсем, хӑйсен пуйанлӑхӗ пирки, йала 20—30 ҫул алӑра тытса тӑнӑскерсем каллех йалта пуҫ пулса тӑратҫӗҫ. Хресҫенсен Совеҫӗсенҫе кулаксем хӑйсен тусӗсен ушкӑнӗсемпе мӗн тӑвас килнине пӗтӗмпех тунӑ. Ҫапла темиҫе уйӑх иртрӗ. Унтан халӑх Комиссарӗсен Канашӗпе мӗн пур Раҫҫейри Канашсен ӗҫ тӑвакан тӗп Кӑмиттеҫӗ каларӗ: Пирӗн йалти ӗҫсене те урӑхлантарас пулат, унти Канашсене те кулаксем мар, ҫӑн ӗҫлекенсем кӗмелле тӑвас пулат, терӗ.

Ҫакна эпир тупнӑ майпа ҫес тума пултармалла пулҫӗ. Эпир каларӑмӑр: есӗ хӑвна ху Канаш тени сахал. Канашра ӗҫлекен халӑх тӑрсан, Канаш тенӗ сӑмах—вӑл аслӑ сӑмах. Йенҫен „Канаш“ тенӗ сӑмаха кулаксем йышӑнниниҫен йалти ҫуханссене пӗрре те ҫӑмӑл пулас ҫук. Апла пулсан, вӑл ӗлӗкхи пуху пекех пулат, йаҫӗ ҫеҫ халӗ урӑх, ӗҫе тӑваканнисем каллех пӗр икӗ-виҫӗ пуйан ҫеҫ. Пире сӑмах кирлӗ мар, ӗҫ пултӑр. „Канаш тенӗ сӑмахпа пире тӑрантараймӑп. Ҫав сӑмах хыҫӗнҫе пуйан куштан-

сем пытанса тăраççĕ пулсан епир вĕсене оркапнсатсн туса ĕçлекене пуйантан уйăрсах хурăпăр.

Епир калаттăмăр ессерсене: Ађнпăђасем çеç, йе политтиккăна пĕрте ђухламан çынсем çеç, йе тата халăх ĕçне сутакансем анђах йалта пуйанпа ђухăна уйăрма кирлĕ мар, теççĕ теремĕр. Çук, ђухăнсене пуйансенђен уйăрас пулат! Çапла туни çеç—револутси туни пулат. Мулăн сылтăм йенђи пĕђĕк ушкăнĕнђен ĕçлекенсен аслă ушкăнне сулахайала уйăрмасăр нийепле револђутси те пулмасŤ йалта та пĕр картпа картлама йурамасŤ.

Кулак йалти пуйан çийелтен пăхсан ђас-ђасах хулари пуйан пек мар. Хулари пуйана курсан ăна ђасах паллама пулаŤ: тумтирри те унăн урăхла, пурăнăçĕ те урăхла, сăн сăпађĕ те урăхла. Хулари пуйан пуçне калăпăр ђилинтăр (шлепке) тăхăнаŤ, çуркунне йут патшалăхри халăх выран-сене кайса емеллекен шывсене кĕрсе çÿрет, аллисем унăн питĕ ађаш, вăл нимĕнте ĕçлеместь. Йалта апла мар. Кунта кулак ђас-ђасах ĕçлесе пурăнатăп тет. Унăн пысăк лавка пулсан, вăл çавăнта ларса вăхăтне иртерет пулсан, йе 30 рапатник, тата 25 лаша пур çинђен пĕр-пĕр уйа кайса рапатниксем йепле ĕçленине пăхсан, вăл ăна питĕ пысăк ĕç тесе шутлаŤ. Çийелтен пăхсан, кулак вăл хресђен пекех. Вăл ђилинтăр та тăхăнмасŤ, çÿрессине те ахађ атăпах çÿреŤ Çапах та кирĕк мĕнле хресђен те кулак хулари пуйан пекех тискеррине пĕлет. Кулак та ĕмĕрген йалти ђухăнсен ĕнси çинђе ларакан халăх тăшманĕ. Ăна ĕнтĕ йалти Канашран хăваласах йарас пулаŤ.

Çавăнпа епир йалти ђухăнсен комиттеђĕсене турăмăр. Илтĕпĕр халăх мĕн каланине, терĕмĕр епир сулахай ессерсене. Есир ђухăнсен комиттеђĕсене хирĕç тăратăр: есир вĕсене тума пире ђаратпăр, тетĕр? Итлĕпĕр йалсем мĕн каланине, темиçе милион хресђен мĕн каланине: çак тĕлĕшрен вĕсен сирĕн хыççăн кайĕç-и, йе пирĕн хыççăн-и? Курăпăр, вĕсем пуйансем сумне çыпăçĕç-и, йе комунист-

сем ҫăн калаççĕ, кулака ҫапса ӳкерес пулат, пĕтĕм халăха тивĕçлĕ пуйанлăха туртса илес пулат тийĕç-и, терĕмĕр.

Халĕ ĕнтĕ епир Раççейри ĕçлекенсен сăмахне илтрĕмĕр. Пирĕн Питĕрти хресҫенсен 18 пин телекатлă сиесҫĕ ҫакăн ҫинҫен хăй пĕҫҫенех питĕ тĕплĕ каласа тăрат. Пилĕк уйăх иртнĕ ҫĕре ҫухăнсен, комиттеҫĕсем пĕтĕм патшалăха сарăлҫĕç. Питĕр кĕпернин, йе Новкăрăтпа Псков кĕпĕрнисен иланне илсен, ҫухăнсен комиттеҫĕсем пур тĕле хĕрлĕ пăнҫăсем лартса тухсан, пирĕн, план хăмаҫ пек хĕрлĕ хут пулса лармалла. Пĕр Новкăрăт кĕпĕрнинҫех ҫухăнсен кăмиттеҫĕсем икĕ пин ытла. Ытти кĕпĕрнесенҫе те вăсем ҫавăн пекех ҫăра. Кунта ҫур ҫĕрте ҫеç мар, Атăл таврашĕнҫе те, Урал патĕнҫе те, Раççей варринҫе те, пур ҫĕрте те пĕр ытлашши каламасăр пирĕн ҫухăнсен комиттеҫĕсем темĕн ҫухлĕ пине те ҫитеççĕ. Вăсем кашни вулăсрах, кашни йалтах пур.

Ыйтасҫĕ: хресҫенсем кам майлă пулҫĕç, пирĕн майлă-ши, йе шурă аллă револютси улпуҫĕн ҫăпписем майлă-и, пире ҫухăнсен комиттеҫĕсене тума памастпăр, тийекен ссерсем майлă пулҫĕç-ши?

Пурăнăç пирĕн майлă хресҫен халăхĕ Капаш ирĕкĕ шухăшнех каларĕ. Ҫухăнсен комиттеҫĕсене пур ҫĕрте те тăвас шухăша хресҫенсем йышăнҫĕç халĕ ĕнтĕ пире ессерсем, йе ытти кирек мĕнле партти кăшкăрни хăратмаст. Кăшкăр-ҫăр, кам кăшкăрма йуратат. Ĕçлесе пурăнакан халăх кун ҫине пăхмасăр, пурнăҫра кирлĕ оркапиисатсисем тăвĕ.

Йалти ҫухăнсен комиттеҫĕсем ҫак темиçе уйăх хушшинҫе питĕ пысăк ĕç турĕç. Епĕ куна ĕç ăнăçнипе хамăра мухтанса каламастăп. Пирĕн мухтанма мар, хамăртан тата та ытларах ыйтма тăрăшас пулат. Пире нумай панă, анҫах пиртен нумайах те ыйтаççĕ. Ҫапах та кайалла ҫавăрăнса пăхсан, епир ҫак темиçе уйăхра йалсем ул-

шăнса кайнă теме пултаратпăр. Унта халĕ тин ĕнтĕ хуласенҫе йупа уйăхĕнҫе пулнă аслă револҫутси пуҫланса кайат.

Мĕн вăл аслă револҫутси? Темиҫе министăрсемпе комиссарсене улăштарни-ши вăл, йе пĕр-пĕр револҫутси йышăнни-ши, йе тата вăл ҫĕнĕ министăра партнине пĕлтерет-ши? Ҫук апла мар, ку вак-тĕвек ĕҫсем ҫеҫ. Аслă револҫутси вăл кашни йала пырса сĕртĕнет, кашни йала пырса тĕпне ҫитиҫҫенех пăтратат. Йалта халиҫҫен политтикка ҫинҫен шухăшламан хĕр-арăмăн та, халĕ ҫĕнĕ пурăнăҫ пуҫланассине туймалла, етемлĕх пурăнăҫĕн кĕнекин ҫĕнĕ листине уҫнине, ҫынсем ҫĕнĕлле пурăнăҫа ҫĕнĕ йĕркепе тума пуҫланине туймалла. Пысăк хуласене уйессене ҫеҫ мар, хăҫан та хăҫан ҫак хум кашни йал патне, кашни хресҫен килне йăванса ҫитет-ҫавăн ҫухне ҫеҫ вара халăхăн ҫăн аслă револҫутсийĕ пуҫланат.

Ҫакăн пек револҫутси пирĕн йалсенҫе халĕ тин пуҫланҫĕ. Йалсем пирĕн куҫ умĕнҫех ҫĕнелеҫҫĕ, вĕсем ҫĕнĕрен ҫуралаҫҫĕ йĕркене пăхса тăмалли ҫĕнĕ уҫрештеписем тăваҫҫĕ. Ҫак ҫĕнĕ йĕркесем йалтан йала вулăсран вулăса, уйесрен уйесе, кĕпĕрнерен кĕпĕрнене саралса пыраҫҫĕ. Халĕ ĕнтĕ йалта пупсемпе стăнавайсем, уратниксем мар, тата „ырă“ кулаксем те мар, ҫăн „хура шăм“, ҫăн ĕҫлесе тăракан хресҫен пуҫлăх пулса тăрат.

Йалти ҫухăнсен комиттеҫĕсен тĕп ĕҫĕ ҫакă ĕнтĕ. Йалсене лайăхрах хумхантарса тир сĕвекен пуйансене хăваласа кăларасси, „пăрăнăр, пуйансем,—ҫухăн пырат“ тесси—акă ĕнтĕ ҫухăнсен комиттеҫĕсен ĕҫĕ. Тусан пек саланса пурăнакан йалти ҫухăнсене пĕр-пĕринпе хытă ҫыхăнтарас ĕҫ, вĕсене пĕрлешсе пурăнма вĕрентес ĕҫ, ҫутта тухассине пĕтĕм пирĕн пысăк патшалăхри халăх пурлăхĕ ĕҫне хăйсен аллине илме вĕрентес ĕҫ—акă ҫакă ĕнтĕ Ҫухăнсен Комиттеҫĕсен ĕҫĕ.

Ку ӗҫе пӗр хутлӑха туса тухнӑ ӗнтӗ. Малалла та темиҫе-темиҫе ҫул хушшинҫе пирӗн ҫак ӗҫе тумалла пулӗ. Пирӗн патшалӑх, пирӗн йал—ҫухӑн ытти халӑхсенҫен тӑрса йулнӑ, ҫутта та питӗ сахал тухнӑ. Малалла пирӗн ӗҫ питӗ-питӗ нумай. Анҫах тӗп ӗҫ: кашни йалта пуйана мар, ҫухӑнсене пуҫлӑх тӑвас ӗҫ,—вӑл халӗ вырӑна кӗҫӗ.

Халӗ епир мӗн-мӗн тунине иртессине шутласа пыратпӑр, темиҫе уйӑх ҫеҫ иртрӗ, анҫах ҫак уйӑхсене, ҫулталӑк тесе те шутлама йурат. Халӗ ӗнтӗ пирӗн хамӑр мӗн-мӗн тунине шутласа пӑхса, акӑ ҫакна пӑхас пулат: тен мӗне те пулсан урӑхла тумалла мар-ши? Ҫӑнах та епир куратпӑр; пирӗн халӑха пӑхса тӑрас йӗрке тата йакарах тумалла.

Малтан пирӗн ҫухӑнсене пӗрлештерес тесе хыпаланмалла мӗн те пулин тумалла пулҫӗ. Малтанхи ун ҫухне пирӗн питех йака пулмасан та пӗр-пӗр органисатси тумалла пулҫӗ. Халӗ куна епир тунӑ ӗнтӗ. Малалла епир хыпаланмасӑр лайӑхрах шухӑшласа хаҫхи вӑхӑтра хамӑра май килекен йӗркене шырӑпӑр.

Епир хресҫенсем, пурте хуҫа, есир хӑвӑр пурӑнӑхӑра тирпейлӗ тытса тӑма вӗреннӗ ҫынсем ҫавӑнпа есир хӑвӑрах ҫухласа илӗр: йалти икӗ пуҫлӑх ан пултӑр тесен, халӑха пӑхса тӑракан органисатсисем хушшинҫе хӑш-хӑш ҫӗрти пек йӑрансем ан пулҫӑр тесен, пирӗн хамӑрӑн органисатсисене питӗ тирпейлӗ тумалла. Кашни кӗпернере, уйесре, вулӑсра, хамӑр пурӑнӑҫ йӗркине туса тӑракан машшина пӗр плانпа ӗҫлеттерес пулат. Пур урапи те, пур винти те, пур ҫӗнӗ те халӑха лайӑх, ҫӑмӑл, йӳнӗ, усӑллӑ пултӑр тесе тӑрӑшмалла.

Халӗ пирӗн йӗркесем, акӑ ҫапла: ҫухӑнсен Комиттеҫӗсем ҫумӗнҫе ҫилай ҫӗрте тата йалти Канашсем ӗҫлеҫҫӗ Вулӑссенҫе те, уйессенҫе те, епир ҫавнах куратпӑр. Ҫухӑнсен Комиттеҫӗсем те, Советсем те ҫас-ҫасах пӗр ӗҫех тӑваҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсем укҫапа вӑйа кирлинҫен ытла кӗте-

реçç̆ĕ. Хăш-хăш Канашсенче кулаксем лараççĕ. Вĕсене халĕ пур çĕртете хăваласа кăларман. Унта Чухăнсен Комитетчĕсемпе пуйансен Канашĕсем кĕрешеççĕ.

Ытти çĕрте пуйансене хăвалана. Канаш йулнă, тата пĕр-икĕ çын йулнă. Вĕсен аллинче пичет пур, вĕсем уйесри пуçлăхсемпе ĕç туса тăраççĕ. Вĕсем чăс-чăсах чухăнсен комитетчĕсем тунă ĕçех тăваççĕ. Икĕ çын пĕр ĕçе пĕрле шут тумасăр тума пуçласан йаланах вĕсем вăрçма пуçлаççĕ, хуçайствăна чăннипе тӳрлетес ĕç ырăнне вара пĕр йĕр есĕрлĕх çеç пулать.

Пирĕн шухăшпа халĕ ĕнтĕ мĕнле орканисатси аса килнĕ çавна хыпаланса тумалла—и вăхăт иртрĕ. Халĕ ĕнтĕ йалсенче те чулăри пекех пур ĕçе те пĕр майпа тăвас вăхăт çитрĕ. Епир акă çапла калатпăр: кашни йалта, вулăсра, уйесре пĕр ирĕк çеç пулмалла Вăл пĕтĕм ĕçе тытса тăрать; йунăш тусан хăй айăплă пулать. Пĕр йалтах икĕ ирĕк пулмалла мар. Икĕ ирĕк пирки йĕркелĕх мар, пĕр йĕркесĕрлĕх çеç пулать Ваттисем çичĕн пăхакан ача куççăр пулвă—тесе ахаль каламан çав. Çавăнпа çакна пĕтерсе пур çĕрте те пĕр Совет ирĕкĕ пулмалла тăвас пулать.

Çакна йепле ĕçе кӳртмелле-ши. йепле тумалла-ши? Епир акă çапла шухăшлатпăр: йалсен пур советсене пуйансем кĕрсе ларнă пулсан, вĕсемпе нимĕнле килĕшӳ те тăвас çук. Вĕсене хулари Советсенчи пек сĕтĕрсе кăлармалла та хăваласах йарас пулать. Епир кулаксемпе пĕрле пурăнаймастпăр: йе вĕсемпе епир. кашни ĕçлекенпе хресчен пĕлет. Пирĕншĕн—и, йе пуйансемшĕн—и, панихитă тăваçсех. Малалла паллă. Пуйансем шăлĕсене палтах хайраса хучĕс. Вĕсене кирек кампа пырсан та йурать: акăлчанпа та, йапунпа та, шуйтанпа та, ĕçрелĕпе те—вĕсене çĕре кайалех туртса илсе чухăнăн енси çине улăхса çеç пултăр.

Ђухӑнсен Комитеттеђӗсене, епӗ ђухӑн, манӑн укҫа икӗ ҫӗр пин тенкӗ ҫӗҫ, ыттисен ҫуршар мӗлйун тенкӗ тийекен „ђухӑнсем“ лекнӗ. Вӗсем ђухӑнсем мар,—шуљӑксем. Ҫакӑн пек „ђухӑнсене“ канашсенђен тӗтӗрсе кӑларас пулат̆. Кӗсйере ҫӗршер пин тытакан „ђухӑнсене“ канашсенђен хӑваласа, кӑларас пулат̆. Вӗсене хӗрхенмелле мар, хӑлхаран тытсах сӗтӗрсе кӑларас пулат̆. Вӗсене ҫапла калас пулат̆: санӑн вырӑн, патшана ыртас тийекен шуррисем хушшинђе, унта кайӑр та, хӑвӑр канашсене туса хурӑр. Йатче анђах, йалти ђухӑнсем Канашӗ йатлӑ ан хурӑр, „йун ӗҫекенсен шуљӑксен канашӗ“ тийӗр. Тархасшӑн, мӗн ђухлӗ кирлӗ, ун ђухлӗ тӑвӑр! Вырӑнтан тухса ӳкнӗ патшасемпе, корољсен советне тума та пултарағӑр. Вилкелм ҫавӑн пек совета ђасах тӑвӗ те тен. Епир сире кансӗрлеместпӗр. Есир те пирӗн Канашсене ан ҫыпҫӑнӑр, пирӗн Канашсем ӗҫлекенсен Канашӗсем пулмалла. Ҫак ӗҫе пӗр хут та туса тухман ҫӗрте хӑвӑртрах тытӑнса пӗр шухӑшлӑ пулса туса тухман ҫӗрте хӑвӑртрах тытӑнса пӗр шухӑшлӑ пулса туса хурас пулат̆. Йалсене питӗ лайӑх тасатса тухмалла. Пӗр йалта та, пӗр Канашра та, пӗр пуйан та, пӗр йун ӗҫекен те ан йултӑр.

Малалла йумах—сӑмах, вӑтам тийекен хресђенсем ҫине куҫат̆. Раҫҫейре вӗсем ђилайах. Вӗсем пуйан та мар, ђухӑн та мар. Ҫак вӑтам хресђен йеплереххине есир хӑвӑр та пӗлтӗр хӑвӑр та ӑна кулакран уйӑрма пултаратӑр. Мӗн тумалла—ши ҫак вӑтам хрӗсђенпе? Тытса енсе ђикки парса кӑларса йамалла—ши ӑна? йе хамӑр йенне ҫавӑрма тӑрӑшмалла—ши?

Пирӗн шухӑшпа вӑтам хресђене ӗнсерен парса кӑларма йурамаст̆. Вӗсем сахалӑн мар, вӗсем ҫӗр, йе пин ҫеҫ мар, темиҫе мӗлйуна та ҫитӗҫ. Вӗсенђен ђилайӗшӗ йепле те пулсан пирӗн майлӑ пулса кайӗҫ.

Епӗ ҫак сӑмаха, есир вӗсене йӑпатса улталӑр тесе каламастӑп. Ҫук апла ак тӑвар, мӗншӗн тесен апла тусан

вĕсем те сире уйталама пĕлĕç. Вĕсене ирĕк ан парăр. Ирĕк ӡухăнсен аллинӡе анӡах пулмалла. Хăваласса та вĕсене ан хăвалăр. Пуйан, уретник, уйпут пулăшманнине каяаса ăпламтарма тăрăшăр. Ку „иртнĕ халап“ пекех вăл малашне текех пулмĕ те ĕнтĕ. Вăтам хресӡенĕн, уйпут çине шанма пăрахса сирĕнне, ӡухăнсемпе пĕрле пыма шухăшламалла.

Калăпăр çапла: пирĕн хуласенӡе вĕренне çынсем нумай; вĕсенӡен те вумайĕшĕ пуйан мар. Вĕсенӡен хăшĕ-хăшĕ лайăх тумтирпе çӳренĕ пирки çеç малтанах ĕçлекен патне пырасшăн марӡĕ. Вăл уйпут çавăрăнса вилессе шанса менелник тăвасса кĕтрĕ. Çакăн пек вĕренне çынсем пĕр çула йахăн çапла ӡăхăмăçларĕç. Кайран-кайран ĕçлекенсен ирĕкĕ нкĕ урипе тăн-тăн тăнине курса, хресӡенсемпе ĕçлекенсĕр пуçне урăх хуçа çуккине курсанах вĕсем текех пирĕн йеннелле çавăрăнса тăӡĕç. Пĕр уйăх пулат пулĕ, пирĕн вĕренне çынсен миттинкă пулӡĕ.

Претçетаттĕл Максим Горький пулӡĕ. Вĕренне çынсем пинĕ-пинĕпе пухăнӡĕç. Вĕсем пирĕн пата ĕçлеме илĕр тесе ыйтма ыӡĕç. Ĕçлекенсене хирĕç ӡилай çылăх тунă пулсан та, епир вĕсене хăваламарăмăр. Епир вĕсене каларăмăр: йурĕ, пуршуйсем тавăрăнас çуккине ăнлантăр пулсан, уйпут пулмасса пĕлсе ситрĕр пулсан, ӡăнах та аслă револӡутси пуçланса хресӡенпе ĕçлекен ирĕке хăйсен аллине илнине ӡухласа илтĕр пулсан, тата пирĕн пата ĕçлеме килетĕр пулсан-йурĕ, хăвăр çылăхăрсене ĕçлесе каçарртарăр, терĕмĕр.

Йулташсем, сирĕн те вăтам хресӡенсемпе çапла тумалла. Вăл та çавăн пекех питне парса çемски наӡалӡник, становой, уйпут шур лашапа килсе кĕрессе кĕтнĕ-и-тен. Вĕсем хушшинӡе ухмах марри те пур. Вĕсем кайалла çул çуккине, тата лапсăркка, ӡухăн хресӡен Раççей патшалăхĕн хуçи иккенне туйрĕç. Çакăн пек вăтам хресӡенсем туртасене кайалла çавăрма пуçларĕç. Каллах калатăп: вĕсене хăвалама йурамаст. Вĕсене ĕçлеттерес пулат, ытти-

семме пӗр танах тӑрӑштарас пулать, коммунӑсене кӳртес пулать. Вӗсене хӑваласан, епир нимӗн уссисӗрех темӗн ҫухлӗ тӑшман туса хурӑпӑр. Епир вӗсене хамӑр йеппе ҫавӑрса кулаксенҫен хӑпӑтма пултарӑпӑр, кун-пирки епир кулаксене те вайсӑрлатӑпӑр.

Кашни йалтах пирӗн-пӗр йенҫе кулаксен пӗҫӗк ушкӑнне хӑварма, тепӗр йенне пур ытти йал ҫыннине тинӗс нек кӗрлетерсе тӑратма тӑрӑшас пулать. Кулаксем ларакан Канашсене салатса пӑрахмалла, пур Канашсене те ҫӗнӗ ҫыылӑшна тасатмалла, пур кантӑксене те кулак шӑршипе кӑларса йамалла. Выҫлӑх пирки пуйас темен нуршуйсен ирӗкне кайалла тавӑрас темен ҫи ҫухӑнсем ҫеҫ йулҫҫӗр (алӑ ҫунаҫҫӗ).

Кулаксене нийепле те Канаша кӳртмелле мар. Кулаксене Совета ан йарӑр астӑвӑр, вӑл унта шуса кӗрсе, урисене сӗтел ҫине ан хутӑр. Канашшӑн тӑракан ҫынсене анҫак кӳртӗр, пӗр ирӗклӗ оркансатси туса пӗр ҫӗрте темиҫе ирӗк пуласса пӗтерӗр.

Пирӗн Канаш Конститтутҫийӗ тӗп саккунӗ пур. Ҫав саккуна пур Раҫҫейри хресҫенсен те, ӗҫлекенсен те тӗрӗс тытса тӑмалла. Ҫак конститтутсине (саккуна) Мускавра 1918 ҫулта утӑ уйӑхӗнҫе пӗтӗм Раҫҫейри ӗҫлекенсен, хресҫенсен, хӗрлӗ салтаксен, касаксен тепуттаҫесен Канашӗсен 5-мӗш сиесҫӗ кӑларса йышӑнна. Ҫавӑнта хурапа шурӑ ҫинҫе ҫырнӑ: хапрӑк-савӑт хуҫи, уяпут, пуйан, кулак тата ытти ҫын ӗҫӗне пурӑнакан, выҫлӑх пирки пуйакан, пур хӑй ӗҫӗпе пурӑнман ҫын Канаша кӗме пултараймасть, тенӗ. Йалсенҫе ҫакна халиҫҫен ӗҫе кӳртмен-ҫӗ. Халиҫҫен йалти Канаша кам ӳркенмен ҫавӑ кӗнӗ. Малалла апла пулмалла мар. Кулака сӑмсипе тӗп саккун ҫине тӑрантарса: есӗ Канаша кӗресшӗн-и? Акӑ сана конститтутси. Ун тӑрӑх есӗ Канаша кӗме пултараймастӑн. Ун тӑрӑх унта ӗҫлесе тӑракан анҫах кӗме пултарать,—тийес пулать.

Вырӑнсенҫе пӗр ирӗк тӑвас пулать Хӑш-хӑш ҫӗрте икӗ-виҫӗ ерне, йе уйӑх хушшинҫех Канашсене тепӗр хут суйламалла пулӗ. Ҫас-ҫасах ҫухӑнсен комитетҫӗсене никам та суйламан, вӗрентме пынӑ акитаттӑр ҫеҫ кӑтартса хӑварнӑ, йе суйласса питӗ сахаллӑн суйланӑ. Малтан ку ҫапла пулмалла пулнӑ. Унсӑрӑн пуҫне урӑх май килмен. Револютсине ҫын суйласа пуҫламалла мар. Малтан пӑнтӑхпа усал ҫынсене пӗтермелле, кун хыҫҫӑн тин ҫӗнӗ йӗрке тума пуҫлас пулать. Халӗ ӗнтӗ ӗҫе пӗр хут туса тухнӑ хыҫҫӑн епир пӗр пӑшӑрханмасӑр ҫухӑнсен орканисатсине суйласа та тума пултаратпӑр. Пирӗн комиттетсем пӗҫӗк ушкӑн пулса ан тӑҫҫӑр тетпӗр епир. Пирӗн комиттетсем темӗн ҫухлӗ мӗлйун хресҫенсемпе пӗр кӑкӑрпа сывлаҫҫӑр' вӗсене пӗтӗм йал ӗнентӗр, вӗсен ирӗкне пӗр пӗҫӗк ушкӑн ҫеҫ мар, пурте йышӑнҫӑр,—тетпӗр епир.

Есӗ хресҫен-и, ӗҫлесе пурӑнакан-и, йе ӗҫлемен ҫын-и? Ӗҫлесе пурӑнатӑн пулсан кил пирӗн пата,—тетпӗр епир. Ҫук пулсан есӗ пирӗн мар. Малашне, ҫак ҫитес вӑхӑтрах ҫакӑн пек хресҫен тепуттаҫӗсен Канашӗсем кашни йалта, вулӑсра, уйесре пулӗҫ. Канашсене мӗн пур йалти тӳрӗ, тӗрӗс ӗҫлесе пурӑнакан ҫынсем кӗрсе тӑмалла. Канашсем пӗтӗм ҫӗрӗ, сывӑ ҫунлӑ ҫынсене хайӗн ӑшне мамӑк пек сӑхса тӑмалла. Йалти ҫухӑнсен Канашӗсен каламалла: епир хамӑр патӑрта хамӑр хуҫа, йалта, вулӑсра, уйесре урӑх хуҫа ҫук, пулма та пултараймаст, темелле.

Ҫакна туса пӗтерсен, епир хамӑрӑн тунӑ ӗҫ ҫине ҫаврӑнса пӑхса кӑкӑра ҫапса калама пултаратпӑр: ӗҫлекенсен тепуттаҫӗсен канашӗсем пирӗн хулара ҫеҫ мар, йалта та пур, кашни йалта пирӗн пӗрлешӳ тунӑ ҫурт ҫеҫ мар, пур ҫӗрте те пӗр ҫаплӑ ӗҫлӗ орканисатси пур,—тийӗпӗр.

Кулаксене пӑвӑр, ҫухӑнсене пӗрлештерӗр. Ҫухӑн хресҫенсен тепуттаҫӗсен Совеҫӗсем сывӑ пулҫӑр! (хыҫӑ алӑ ҫупаҫҫӗ).

**Йулташ Зиновьев йаҫӗпе уҫӑлнӑ хресҫен университтетӗнҫи вӗренекенсене калана сӑмах.**

(Ҫӳк уйӑхӗн 28-мӗш кунӗнҫе йул. Зиновьевӑн Питӗрти Канашра калана сӑмах).

Йулташсем, виҫӗ уйӑх ҫитет ӗнте, епир ҫак йулташ Урицкий ҫуртӗнҫе хресҫенсен Питӗрти пуҫламӗш университтеҫӗн ӗҫсем пуҫланнине кура хӗпӗртерӗмӗр. Пайан та пирӗн ҫак ҫуртрах епир кӑтартнӑ курӑса вӗренсе пӗтернӗ тӑван йулташ хресҫенсене ӑсатса йамалла.

Йулташ хресҫенсем, есир пирӗнтен мӗн кӗтнине епир сире пурне те пӗлтерейман. Ку хӑй тӗллӗнех палла сирӗнпе пӗрле епир кунта ытла ӗҫлейменӗмӗр кунтан ытла канӑҫлӑ вӗрепме май параймарӑмӑр, пур йенҫен те сире лайӑх пахаймарӑмӑр. Ҫапах та епир ҫак виҫӗ уйӑх сирӗншӗн ахалех ҫухалмарӗ пулӗ тесе шанатпӑр. Епир сире хамӑрӑн ҫи лайӑх лектӑрсене (вӗрентекенсене) итлеме май патӑмӑр. Хресҫен университтетӗнҫен пур ҫынсене те епир пӗр аслӑ ӗҫ ҫинҫен канашланӑ ҫӗре те ҫӗнмесӗр хӑвармарӑмӑр. Йулташсем, епир кунтан пурӑ алпа тухса кайас ҫуккине епир ӗненсе тӑратпӑр.

Питӗрте пурӑнни сирӗншӗн ахалех иртейменнине епир ӗненсе тӑратпӑр. Ҫак ҫи маланхи ушкӑнах йалсенҫе пысӑк ӗҫ тӑвасса та епир шанса тӑратпӑр.

Питӗрти Канашӑн Преҫидиумӗ пуҫламӗш ушкӑн вырӑнне иккӗмӗш ушкӑн пухас, терӗ; ҫӗр-ҫӗр йенҫи 88 кӗпӗрнен хресҫенӗсем вӗренҫӗр тесе иккӗмӗш университтет уҫас терӗ.

Епир пурте пурнҫен ытла йалта ӗҫлеме ле тетпӗр. Ҫавӑнпа пирӗн хамӑр вӑйа йала куҫарса унта Канашӑн тӗрекне тӑвас пулат.

Йулташсем, хӑлӗ сирӗн умра тӗрлӗрен ӗҫсене тӑвасси тӑрат: хӗрлӗ ҫар, комиҫсем ӗҫӗсем тата ытти ӗҫсем те. Хресҫенсен пулӑшӑвӗсӗр пуҫне епир хамӑра сывлӑш пек кирлӗ виҫӗ мӗлйунлӑ хӗрлӗ ҫара тӑвас ҫук. Сирен йалти

пуҫламӗш ӗҫ—вӑл йалсенҫе хӗрлӗ ҫар мӗншӗн кирлине каласа ӑнлантарасси. Йалти ҫӑн тӗпӗнҫи сисене хӑпартас пулат, хӗрлӗ ҫар—ҫухӑнсен ҫарӗ иккенне, вӑл пире хамӑр патшалӑхри ирӗке хресҫенсемпе ӗҫлекенсен аллинҫе тӑратма кирлӗ, иккенне каласа памалла.

Кунта пайан теҫерттирсен намӑслӑ ӗҫӗ ҫинҫен каларӗҫ. Ку ӗҫ пирӗн ҫарта халӗ те курӑнат.

Ҫакна пӗтерме кам пултарӗ? Есир анҫах, йулташсем.

Есир йала пырса вӗрентсе ӑнлантарнипе теҫерттирсесене хӗр-арӑмсем те хӑвалаҫҫӑр, вара вӗсем киле тавӑрӑнма вӑтанӗҫ. Пурте вӗсене пулмас ҫын пек шутлама пуҫлаҫҫӑр,—вара вӗсем намӑсран хӑрасах тавӑраваймӗҫ. Патшана мар, пуйана мар, хамӑр ҫухӑнсен ҫӗр-шывне сыхласа ҫапӑҫакан хӗрлӗ ҫара пӑрахса киле килме вӗсен вара кӑмӑл пулмӗ.

Епӗ йалти хӗр-арӑмсене аса илтӗм. Ӗнер пирӗн опластри Коммунӑн Преҫатиумӗ раштав тӗлӗнҫе Питӗрте пур ӗҫлесе пурӑнакан хулари, йалти хӗр-арӑмсенӗн Опластри сйестне пухмалла турӗ. Ҫав сйеста вӑл 2—3 пин хӗр-арӑм телекат ҫапӗпе шут тытрӗ. Ҫак ӗҫре те, курсант йулташсем, сире пуринҫен те ытла ӗҫлеме лекет. Пирӗн Канаш Раҫҫейӗнҫи халӑхӑн ӗҫлекенсемпе хресҫен хӗр-арамӗсене тепӗр пайне хӑпартас пулат. Вӗсем хушшинҫе ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тумалли вӑй темӗн ҫухлӗ.

Кунта тӗрӗссине каласан епир хамӑр та тӗрлӗ суйа шухӑшсене пӑрахайман ха. Нумайах та мар Питӗрти ҫухӑнсен Комитеҫӗсен опластри сйесҫӗ пулҫӗ ҫавӑнта 18 пин ҫын пулҫӗ. Ҫапах та унта пӗр хӗр-арӑм та ҫук тенӗ пек пулҫӗ. Йулташ Горький мана хӑш-хӑш хресҫенсемпе кӑлаҫни ҫинҫен каласа кӑтартрӗ. Хӑй кам иккенне палӑртмасӑр вӑл телекатсен хваттерне пырса вӗсемпе калаҫнӑ. Вӗсем питӗ тӳррӗн йумахланӑ. Мӗншӗн сйестра хресҫен хӗр-арӑмӗсем ҫук, кунта мӗн ҫинҫен канашлани вӗсене кирлӗ мар-и-мӗн? тесе ыйтнӑ вӗсенҫен Горький. Хӑйнӗ

шарлламарĕç, тет. Ыттисем, епир кунта ĕç тунă ҫух пĕр пĕрине вăрçăпăр та; йĕркесĕр йапала пулат вĕт вăл хамăр вăрçнине хĕр-арăмсене çав тĕрлĕ типтерленинҫен тĕлĕнмелле мар-и-вара? Йалта пурте пур çĕрте те йаланах вăрçаççĕ. Унта вăрçаканĕсĕм пĕртте вăтанмаççĕ. Çак хресҫенсем ҫейепе килте нихăçан та вăрçман пек кăтартса, ҫăн мĕн пуррине пытарçĕç.

Тахăçанхи тĕттĕмлĕх пирки çеç йалти хĕр-арăмсене сиестсене йамаççĕ. Кунта хĕр-арăм ăсĕ çитес çук, теççĕ те çавăнпăн хĕр-арăмсем çĕнĕ пурăнăç Канаш ĕçне пулăшаймаççĕ. Канашсенҫе те епир çавнах куратпăр. Хĕрарăм сахал, пĕр-иккĕ шутлатăн та, урăх çук та.

Çак йапала пĕтĕм пурнăçăн тĕп шухăшĕ. Хĕр-арăма ирĕк памасăрах сотсиалисăм çĕнтерет, тесен, кулăшлă пулĕ-ҫҫĕ. Етем ăрăвĕн хăрах çурри ирĕнпе пĕрле пулмасан йалсенҫе çĕнĕ пурăнăç тăватпăр, тени те кулăшлă пулĕ-ҫҫĕ.

Епир çавнашкаллă хĕр-арăм сиестпе пухас тесе сире йала кайакан йулташсем, çак шухăшра пире пулăшма ҫĕнетпĕр. Ку ĕçе хĕр-арăм ăсĕ çитес çук тесе вĕрентекен пупсене йатласа çапса пăрахăр.

Хĕр-арăма хăпартсан епир икĕ хут вăйлăрах пулассине ирĕн ăнланас пулат. Вара ирĕн хĕрлĕ çар та вăйлăланĕ, кил-йыш пурăнăçĕ те çĕнелĕ, вара сотсиалисмлă пурăнăç йĕркене те епир хăвăртрах пуçласа йарăпăр.

Йулташ курсантсем, сирĕн умра тинĕс пек аслă ĕç уçăлат. Хăвăр йалсенҫи, вулăссенҫи хресҫенсем сире хытă ĕненсе ҫилай ĕçсем çинҫен ыйтĕç. Ҫăн малтанах сирĕн ĕç çинҫен каласа кăтартма пĕлес пулат. Ку ĕç епир мĕншĕн вăрçă вăрçни тата кампа вăрçни. Ыран епир Питĕрти интелликентсине пухса вĕсене ыйтăпăр. Кам кирлĕ сире? Анкли-и, Раççей-и? Раççей Анклири капиталистсен айĕнҫе пултăр-и, йе вăл ирĕклĕ патшалăх пултăр, тетĕр-и есир? тийĕпĕр.

Интеллинкентсем пӗр йенҫен тепӗр йенне сулланине сулламаннине епӗ пӗлместӗп. Вӗсенҫен хӑшӗ-хӑшӗ халӗ те Анкли ҫашӑк ҫинҫе ирӗк йӑтса килсе парӗ, теҫҫӗ пулмалла. Хресҫенсем хушшинҫе унталла—кунталла шухӑшлакансем пулмӗҫ. Вӗсене ӑнлантарса ҫеҫ памалла, епӗ ӑна пӗлетӗп. Вӗсем Раҫҫей тыррипе сахӑрне акӑлҫансем сыснисем валли турттарса кайнишӗн пулас ҫук. Раҫҫей тыррипе сахӑрӗ Раҫҫей халӑхнех пултӑр, ҫӗр улпутсене мар, хресҫепсене пултӑр тийӗҫ вӗсем.

Вӑрҫӑ йывӑр ӗҫ. Тӑватӑ ҫул ҫурӑ йун тӑкса вӑрҫнӑ хыҫҫӑн сынсене каллех вӑрса ҫӗнме питӗ йывӑр. Хӑш ҫухне ӑнланайман пирки хронтран таракансене ӳпкелеме те алӑ ҫӗкленмест. Ҫӑнах та вӑрҫӑ йалтах хӑрушӑ ӗҫ. Пӗтӗм Йевроппӑна етем йунӗпе сапса тухнӑ хыҫҫӑн, темиҫе мӗлйун етем тунӗ пӗтнӗ хыҫҫӑн сынсен вӑрҫас килменни паллӑ. Ҫавӑнпа халӗ мӗншӗн вӑрҫма кирлине ӑнлантарас ӗҫ—йывӑр ӗҫ. Хӑҫан та пулсан, мӗншӗн те пулса, темӗн пулсан та вӑрҫӑ вӑрҫмалли пулсан ҫакна халӗ тумаллине ӑнланас пулать.

Халӗ ку икӗ хут иккӗ тӑваттӑ пулни пекех витӗр курӑнать. Малтан акӑльҫансем хӗвел-тухӑҫ йенҫен пырса нимӗҫсене вӑйсӑрлатма кирлӗ тесе Раҫҫейе пыратпӑр теттӗҫ. Халӗ Керманпи вӗсен ури айӗнҫе, вӗсем уна Престринҫен йывӑр килӗшӳ ҫырса паҫӗҫ. Ҫакна есир хӑвӑр та куратӑр.

Нимӗҫсене вӗсем акӑлҫансен тарҫи пулмалла килӗшӳ хутне алӑ пустарҫӗҫ. Ҫапах та акӑлҫансем пирӗн ҫӗр шыв ҫине тӑрӑнаҫҫӗ. Епир акӑлҫансенпе пӗр тӗрӗттин ҫӗр те илменнипе кашни минутрах епир вӗсемпе килӗшӳ тума хатӗррине кирек кам та пӗлет. Ҫапах та вӗсем пире хирӗҫ йаппунсене, мӗриккансене, ҫерпсене, ҫитменнине тата крексене те пуҫтарҫӗҫ. Пӗтӗм ҫӗр ҫаврашкинҫи пурӗшуаҫине пуҫтарса сире нимӗнле саккун та сыхлама пултараймасть терӗҫ. Ҫакна халӑх ҫӗлхипе каласан, епир сире

пурне те персе ҫапса вӗлерсе пӗтеретпӗр тени пулать. Ҫакна вӗсем пире ҫӗре улпутсене таварттар асшӑнах тӑваҫҫӗ.

Ҫухӑнсен сиесҫӗнҫе епир, ҫӗре улпутсене тавӑрса парас-и?—тесе ыйтрӑмӑр. Кунта кутӑн пуҫӑн шухӑшлакан ҫук; вӑрҫӑ вӑрҫатна, йе улпутсене ҫӗре кайал ла паратӑн-и? Хресҫенсем пӗр сасӑпа каларӗҫ: ҫук, ҫӗре епир ҫапӑҫмасӑр памастпӑр, терӗҫ.

Йулташсем, ҫаккӑн ҫинҫен сирӗн кашни вулӑс, йал пуху умӗнҫе каласас пулать. Ҫапӑҫмасӑр улпутсене параттар-и ҫӗре, йе империалистсемпе вӑрҫӑ вӑрҫатӑр-и? Вӗсем пирӗн патралла тӗкӗнеҫҫӗ, анҫах епир виҫӗ мӗлйун лӑ ҫар туса тимӗр хӳме пулса тӑрсан вӗсем пиксе пӗреймес. Ҫак ҫар ҫинҫен епир питӗ нумай калаҫрӑмӑр, тӑваса питӗ нумайах тӑваймарӑмӑр. Пирӗн курпӑсӑн тӗп шухӑшӗ ҫакӑ.

Хал йалсенҫе Ҫухӑнсен Комиттеҫӗсене тепӗр майлӑ тӑваҫҫӗ. Комиттетсем йалти Канашсемпе пӗрлешеҫҫӗ. Епир кашни йалтах ӗҫлекен ҫухӑнсен аллинҫе тӑракан пӗр Канаш ирӗкӗ тӑвас тетпӗр. Халӗ унта Канашсене тепӗр хут суйлаҫҫӗ. Есир хресҫенсене пӗрлештерес тетӗр пулсан, сирӗн Канашсене суйланӑ ҫӗрте пулса ҫухӑнсене мӑшкӑл туман ҫынсене анҫах кӳртме тӑрӑшас пулать. Хӑйсен ӗҫне пӗлсе, ӗҫе вӗҫне ҫитиҫҫен тытса пыма пултаракан Коммунисӑмла Канашсене пур йалсенҫе те туса пӗтерӗр.

Хресҫенсем хушшинҫе ҫак таранҫен те Канаш ирӗкпе хирӗҫ тӑма аппаланакан пур. Тампов кӗпӗрнинҫе ҫак кунсенҫе хресҫенсене Канашсене хирӗҫ тӑратма тӑрӑшрӗҫ. Хресҫенсене каланӑ: сирӗн вулӑсра ҫеҫ Канашсем тӑраҫҫӗ, ытти ҫӗрте пур ҫӗрте те Канашсене хӑваланӑ, тесе суйса вӗрентнӗ. Унта ҫапла пӑтратакансем хресҫенсемпе патрус тумтирне тӑхӑннӑ ахвитсерсемпе йенералсем пулнӑ. Акӑлҫансен мӗскӗн тарҫисем ессерсем те унта пыҫӗҫ, унта хронт тӑвас терӗҫ. Хайне хайех палла, ҫак йурӑхсӑр ӗҫ саланса кайрӗ, анҫах хӗҫ-пӑшалпа тӑнӑ пирки нумай ҫын

вуҫӗ пӗтрӗ. Ҫакӑн айӑпӗ ҫав ӗҫе тӑвакан провокаттӑрсен муҫӑйсем ҫине пултӑр.

Черновпа унӑн ушретилкӑ ҫарӗ Самар патӗнҫи Ивӑҫенков Савӑт йенҫи ӗҫлекенсене хӗрлӗ ҫара пулӑшма тӑнӑшӑн темиҫе ҫӗр ҫын персе вӗлерттернӗ. Ҫакна Чернов Самартан тарас умӗн хӑй кӑларакан хаҫат ҫине ҫаптарнӑ. Ҫак пуҫсӗр Чернов ӗҫлекенсене персе вӗлерни ҫитмен, тата ун ҫинҫен суйа куҫ-ҫулӗ кӑларса мӑшкӑлама тытӑннӑ. Мӗн ҫухлӗ хӗрхентӗм мӗскӗн ӗҫлекенсене персе вӗлерме, тесе ҫырат Чернов. Анне аттене хӗнесе ывӑнҫӗ! тенӗ пекех ку. Кунтан пуҫсӗр йапала вуласа курман епӗ.

Ҫавнашкаллӑ хоспотасем тӗттӗм хресҫенсем хушшине кӗрсе вӗсене ӗҫлекенсене хирӗҫ пыма хӗтӗртеҫҫӗ. Йалта тумалли ӗҫ темӗн ҫухлӗ ишӗлсе выртат. Унта кайӑр та хресҫенсен куҫӗсене уҫӑр, вӗсен парттийӗ пӗр ҫеҫ: вӑл ӗҫлекенсен парттийӗ, коммунистсен партти ҫеҫ.

Йулташсем йалта кулаксемпе кӗрешме тин пуҫланӑ. Ҫилай ҫӗрте халиҫҫен те ҫаплах хресҫен мӑйӗ ҫинҫе ларакан кулака, пупа, улпута пӑвма лайӑхрах пултӑр тесе Канашсене халӗ тепӗр хут суйламалла тунӑ. Хуларан йала халех пирӗн пулӑшупа пымалла. Мӗн май килнине епир пӗтӗмпех тӑвӑпӑр, мӗншӗн тесен пирӗн ҫӗнтересси-хулапа йал ҫыпҫӑнса тӑнинҫен килет.

Кайар, йулташсем, йала ҫитсе, йал ҫыннине йертсе пыма. Йала кайса хӑйсене мӗн кирлине пӗлекен ҫынсен— коммунистсен ушкӑнӗсене, пӗҫӗкҫӗ пулсан та, тӑвӑр. Епир хулара пуршуаҫине пӗтерпӗ пек кулака майран пӑвма пулӑшӑр хресҫенсене.

Пӗтӗм тӗнҫери револютси пуҫланат, вӑл пуҫлансан йулашки татса каламалла сӑмаха ҫухӑн хресҫенӗн каламалла пулӗ. Керманире те Перлинре ӗҫлекенсем хулари панккирсемпе Шейдемана ҫӗнтерсен те, вӗсен ҫилайҫҫен тата кулаксемпе вӑрҫмалла пулӗ. Кулаксем Керманире ҫи-

лайӑн. Ку вӑрҫӑ пирӗнтен иртсе кайаймӗ, вӑл пуҫланаттӑ. Йалта халӗ йупа уйӑхӗнҗи револҗутси хӗрсе пыратӑ.

Йупа уйӑхӗнҗи револҗутсине тӑсса җухӑн хресҗен тиктаттурине туса кашни йала кулаксенҗен тасатма кайӑр.

Веҫйеконск уйесӗн пӗр вулӑсӗнҗе хресҗенсем акӑ ҫапла тунӑ. Епӗ ун ҫинҗен Веҫйеконскра тухакан хаҫат ҫинҗе вуларӑм. Җухӑн хресҗенсем пӗтӗм йала сырҫа тухнӑ. Акӑ ҫаксем: Иван, Ҫытӑр—тӳрӗ хресҗенсем, вӗсем ӗҫлеҫҫӗ Канашшӑн тӑраҫҫӗ кусем пекки 25 ҫын. Малалла тепӗр ушкӑн, ҫаксем Канаш ирӗкӗ майлӑ, йе ыранах канаш майлӑ пулаҫҫӗ. Виҫҫӗмӗш ушкӑн ӑнланайманнисем, ҫурри тӗттӗмреххисем. Кайра тӑваттӑмӗш ушкӑн тӑратӑ „икӗ—айки те тӑв айки“ тийекенсем, йе „пире те, сире те“ тийекенсем. Җӑн кайра пилӗкӗмӗш ушкӑн: кулаксем, провоккаттӑрсем, шантарсем, пупсем, тата ыттисем те. Кусене пурне те йатран ҫырса тухнӑ. Ку пиллӗкӗмӗш ушкӑна хресҗенсем, мӗн тунине пӗлместӗн. Анҗах манӑн шутпа пӗтӗм тӗнҗе револҗутсипе кисренсе тӑнӑ җух пурӑнаҫа хӗрхенмесӗр вӑрҫнӑ җух ҫавӑ пилӗкӗмӗш ушкӑнпа мӗн тумаллине хресҗенсем хӑйсемех пӗлҗӗҫ пулӗ. Есир те ҫапла туса пӑхӑр: пур йалта та ҫырса тухӑр та, пур пусмӑрлакана кулака, йун ӗҫекене хӑлхаран тытса хӗвел ҫине кӑларса, мӗн кирлине туса, хулана пулӑшӑр. Вара никам та пирӗншӗн хӑрушӑ пулмӗ. Палаҗ Вилкелм пӗтнӗ пекех акӑлҗансен империалисӑмӗ пӗтӗ.

Хулапа йал тӑванланса сыпӑнни сывӑ пултӑр!

(Кӗрлесе ал ҫупаҫҫӗ).

## ТĔП ҪАВАШ ҪАЙĔ КĂЛАРНĂ КĔНЕКЕСЕМ:

1. **Преображенский.** *) Тырă монополийĕ кирлĕ-ши, кирлĕ мар-ши?.

2. **Н. Бухарин** *) Канаш республиккинҫи ҫиркӳпе шкул.

3. **Карпинский** *) Килĕшӳ, йе-вăрҫă?

4. **Троцкий.** Выҫлăхпа кĕрешер.

5. **Ф. Тимофеев.** Ҫăвашла тĕрĕс ҫырмалли пăравелăсем.

6. **Н. Никольский.** Конспект по грамматике чувашского языка.

7. *) Тыткăнран таврăнакансене калана салам.

8. *) Йалта коммунистсен йаҫейккисене.йеппе йĕркепе тумалла.

9. Коммунистиҫески Интернатсионал йанă манихвест.

10. Йупа уйăхĕнҫи револютси мĕн паҫĕ?

11. Пирĕн йалав.

12. Колҫак.

13. Хĕрлĕ ҫăлтăр.

14. **Ваттин**—Мĕн вăл коммуна?

15. **Артур Арну** Коммунăн виллисем.

16. Раҫҫей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккин конститутсийĕ (кĕнекенĕн).

17. Раҫҫей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Республиккин конститутсийĕ (плакатпа).

18. Ем. Ярославский. Авкуст Бебел.

19. **Боль, К. Г.**—Ҫĕнĕр ҫирĕ.

20. **Сошественский.** Урнă йытпа урнă выҫăх.

21. **Цикколини.**—Нимĕҫ вăрҫи пуҫланни, вăрҫăн айăпла ҫынĕсем.

22. *) Патша, пуп тата куштан пуйан (плакатпа).

23. **Бухарин Н.**—Коммунистсен (польшевиксен) прокрамми.

24. **Лилина.**—Револютси халăха мĕн паҫĕ?

25. Зиновьев. Хресченсем патне йана çыру. Йалсене тырăсем пухса çӳрекен отретсене мĕншĕн йараççĕ?

26. Ярославский.—Карл Маркспа Хритрих Енкĕлс.

27. Керженцев.—Акăлчансем хăйсен çĕрĕнчи хресченсене мĕнле хĕсĕрлеççĕ.

28. Арнольдов.—Лашапа çыннăн манка чир.

29. Вăтам хресченĕн çырăвĕ тата Ленинпа Тротский йулташсем ăна хирĕç калани.

30. К. В. Иванов. Нарспи.

31. Сченка Раçинпа чăваш халăхĕ.

32. Белая.—Хресченсем (тăвата пайлă пйесса).

33. Парттире тăракан паллă çынсен. пухăвĕнче йулташ Ленин каланă сăмахсем.

34. Фирсов.—Чтения по истории народностей Поволожья (выпуск первый).

35. О. Андреев.—Çĕре çĕнетесси çинчен.

36. Çĕнĕ шкул.

37. Бюллетени Первого Всероссийского с'езда работников просвещения и социалистической культуры среди чуваш.

38. Шлихтер.—Револютси вăрçĕ, мĕнле вăл пуçланса кайнă, хăçан вăл пĕтмелле.

39. Зубрилин.—Курăк йепле акса тăвасси.

40. Мельников.—Пыл хурчĕсем пĕр пĕринпе пыл вăрлани.

41. Ленин йулташăн Колчака çĕнтернĕ пирки ĕçлекенсемпе хресченсем патне йанă çыру.

42. Меншĕн епир вăрçатпăр.

43. Н. В. Васильев.—Хитре Чĕкеç.

44. Чăваш йумахĕсем.

45. Карпинский.—Кампа есир хресченсем?—Кампа пыратăр?—Кама пулăшатăр?

46. Кашни хресченĕн мĕн пĕлсе тăмалла?

47. Çĕр-улмипе пăсăласран сыхлăр.

48. **Штуцер**.—Выҫӑх-ҫӗрлехе тӑрантӑрасси ҫинҫен.

49. **Боль, К. Г.** Ҫӑхсен халерӗ.

50. **Иванов, Б.** Парттине орканисатсилӗр!

51. **Гаршин**.—Хӗрлӗ йалав.

52. **Л. Толстой А. Пущкин**.—Тӑр ухмах. Пулӑҫӑпа ылттӑн пулӑ.

53. **С. М. Вишневский**.—Пӗринҫен тепӗрине сиксе йерекен ҫирсем.

54. Канашсен ирӗкӗ.

55. **Агр. Дмитриев**.—Пахҫа ҫимӗҫне килте лартса тӑвасси.

56. **Попов**.—Каҫакасем усрасси ҫинҫен.

57. **Агр. Ткаченко**.—Тырӑ лайӑх пултӑр тесессӗн мӗнле вӑрлӑх акмалла.

58. Ҫума йатлӑ ҫир тата уптан йепле хӑтӑласси.

59. **О. Андреев**.—Выҫӑх-ҫӗрлӗхе ҫитерекен тӗрлӗ тымар ҫимӗҫе (ҫӗр айӗнҫе пулакан ҫимӗҫе) акса пӑхса тӑвассси ҫинҫен.

60. Раҫҫей Коммунисҫӗсен (полҫшевиксен) парттин прокрамми. 1919-мӗш ҫулти пушӑн 18—23 кунӗсенҫе парттин 8-мӗш сйесҫе йышӑннӑ.

61. **Бебель**.—Пулас (сотсиалисӑмла) опҫествӑ.

62. **Самойлова**.—Йупа уйӑхӗнҫи револҫутси ӗҫлекенпе хресҫене мӗн паҫӗ. (Револҫутсин 2-мӗш ҫулталӑкӗ—Йупан 25-мӗшӗ 1917 ҫ.—Йупан 25-мӗшӗ 1919 ҫ.)

63. **Кий**.—Канашсен респупликки.

64. **Зиновьев**.—Влатимир Илйиҫ Улҫйановӑн (Ленинӑн) пурӑнӑҫӗ.

65. **Ленин**.—Пысӑк выҫлӑх.

66. Ҫӗре сотсиалисӑм йӗркипе ваҫеҫсе сотсиалисӑм йӗркипе ӗҫлесси ҫинҫен кӑларнӑ саккун.

---

Казань Третья Государственная Типография